**Порфирий Афанасьев**

## КУ ЭСĔ, МАН ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ

Ку пĕтĕмпех — Чăваш çĕршывĕ:
Тăрнакуç пек таса çăл шывĕ,
Кĕтни, Çавалĕ, Сăрĕ, Вылĕ,
Сĕткенĕ, сывлăшĕ, симпылĕ,
Ем-ешĕл курăклă çаранĕ,
Çурта пек тӳрĕ хыр вăрманĕ,
Шыв хĕрринчи йăмраллă ялĕ,
Кикак-кикак хур-кăвакалĕ,
Упи, пакши, тилли, мулкачĕ,
Чĕкеçĕ, пăчăрĕ, хăлачĕ —
Ытла тăван, ытла та çывăх.
Ку пĕтĕмпех — Чăваш çĕршывĕ.

Ку пĕтĕмпех — Чăваш çĕршывĕ.
Эс çĕнĕ те, эс пигĕ кивĕ.
Сăваплă Улăп тăприсемлĕ,
Кăлканлă, хытхура çеремлĕ
Çĕрпе кунçул йăранĕ урлă
Курнать ман несĕл — хĕнлĕ-хурлă,
Сăхманлă, çĕтĕк çăпаталлă,
Çапах мал ĕмĕтлĕ, хаваллă,
Çапах тӳрккес, çапах пăлхавлă,
Пин юрăллă, пин-пин сăмахлă...
Пуçа усса ларман хĕр-ывăл
Ӳстернĕ эс, Тăван çĕршывăм.

Ку эсĕ, ман Тăван çĕршывăм —
Хăватлă, çирĕп, чĕрĕ-сывă,

Октябрьте хӗвел ҫунатлă
Эс ҫӗнӗрен тепре ҫуралнă.
Сана сӳнми телей пилленӗ
Тăван аттемӗр — Аслă Ленин.
Ҫав тивлетпе — сулмаклă, ирӗк —
Эс ҫӗрӗн-кунӗн, каҫăн-ирӗн
Шав ҫӳлелле ӳсме пуҫланă,
Ӗҫпе кӗрешӳре туптаннă,
Эс хывнă хӳхӗм юрă-сăвă.
Ку эсӗ — ман Тăван ҫӗршывăм.

Ку пӗтӗмпех — Чăваш ҫӗршывӗ.
Хăюллă та ăста хӗр-ывăл:
Мала ыткăнакан Чапаев,
Мухтавлă кăйкăр Николаев,
Трибун — кăвар чӗреллӗ Ҫеҫпӗл,
Искусствăра ҫӗкленнӗ шеппӗн
Надежда Павлова...
Сахал-и
Чăвашăн чапӗ, чун хавалӗ?!
Тӗнче курмалăх, ăмсанмалăх
Ҫитӗнӳсем тăвать те халăх,—
Калатăп эп: Вăйлан, ан ывăн,
Тăван сăпкам, Тăван ҫӗршывăм!

Ку пӗтӗмпех — Чăваш ҫӗршывӗ.
Кӗҫех эс ҫӗнӗ тинӗс хывăн.
ГЭС ҫутисем пин-пин хӗвелӗн
Ҫуталӗҫ Атăлта илемлӗн.
Ҫӗр кисретсе ăсанӗҫ шавлăн

Вӗр-ҫӗнӗ тракторсем хăватлăн.
Ку — ман ҫӗршыв. Таса гӳпеллӗ,
Пуян та тулăх уй-хирсемлӗ,
Хăмлаллă, ҫăкăрлă, садсемлӗ,
Ӗҫчен, ăста, маттур ҫынсемлӗ...
Эс ӗмӗр-ӗмӗр пурăн сывă,
Тăван ҫӗршыв — Чăваш ҫӗршывӗ.

П. В. Афанасьев. Чун ҫути : сăвăсемпе поэма / Порфирий Афанасьев. - Шупашкар : Чăваш кӗнеке изд-ви, 1980 (Шупашкар : Чăваш Республикин наци библиотеки, 2019). – С. 9-11.